МИХАИЛ СУНТАЛ

# *ПĂХАТЬ-ХА ХĔВЕЛ ПĔР ХУШĂ*

x x x

Пěр самант пек туйрăм иртнĕ пурнăçа.
Пěр самант кăна ак эп тăрап пăхса,
Çавă самантпа та кăшт пулап хуçа...
Ак эп, пěчěк çеç пек, урамра çӳреп,
Пěччен юлнăран-ши питĕ хыт йěреп...
Ак шыва кěретěп шыв чăххи пекрех,
Çыранра ларатăп çӳç типиччен çех...
Хырăмсем выçсассăн, пěр кĕтӳ ача
Кашличĕ çимешкěн кайрĕ вăрмана...
Çавăнпа пуль эп те ӳсрĕм курăк пек,-
Ӳссе çитнине те ман ăçтан пěлес?
Пěр самант çеç иртнĕ эп çуралсанах,
Çавă самантра та эп ача анчах!

x x x

Пырса кěрсе тет манăн чун
Сип-сивě те çап-çутă кун.
Халь çав кунрах пулас килет.
Ман чунăм пуль унтах çӳрет...
Арапуçри чи çӳл çěрте
Больница çурчě пěр тěлте
Тахçантанпах-ха вырнаçса,
Паян унта ман чăнласах
Ěлěкхи пек пуласчě-ха,
Çав ача пек çухрасчě-ха...
Çуралнă çуртăм тěлěнче
Тěнче халь чисти кěленче!...
Пěр ял ак курăнать çумра
Кунтан пěр вунă çухрăмра, -
Эп ӳснě ял вăл пулмалла!
Вăт çав ялтан,эп çуралсан,
Атте пырса тет лашапа...
Ача çуралнă япала
Кăштах вăл сыпнă пулмалла.
Çулсем те пулнă пулě япăх...
Атте калатчě: «Эп сана
Илсе тухсан больницăран,

Аннӳ тытса пырайманран,
Тухса ӳкеттӗн ҫунаран...».
Эп юлнӗ пулӗ ҫавӑнтах
Сип-сивӗ те тӑп-тӑрӑ кун.
Ман пурнӑҫ халь те япӑхрах,
Тен ҫавӑнпа эп кӑшкӑрап
Тухса ӳксессӗн пурнӑҫран?

x x x

Эп сукмакпа чупса анап,
Сукмак ҫинчех пӗр панулми курап:
Шап-шуррӑн ҫеҫ хура тӑпра ҫинче
Пӗртен-пӗрех пулать хӑех тӗнче.
Вӑл ман пекех кусса анать
Ҫак сукмакпа ҫырма тӗпне...
Тахҫан вӑл ман пекех симӗс ача пулса,
Турат ҫинче чуччу кӑшт ярӑнса...
Халь ӳкнӗ те пуҫлать ҫӗрме,
Эп илтӗм те... Ун, чӑн та, пур
Пӗр-ик енчен шӑтарнӑ хурт палли.
Апла пулать, шутлап, тута валли.
Ҫыртса пӑхап та... пур эмел тути.
Тӗнчен те ҫавӑн пек вӗт пур йӳҫҫи!
Мӗн чухлӗ суярах, вӑл ҫавӑн чухлӗ чӑн пек.
Мӗн чухлӗ хуртлӑрах, улма пек, курнарах...
Чупса тенӗ пекех ҫырма тӗпне анап,
Тӗнче улма тути калать.

x x x

Чун, тӗлӗкри пек, пӗр кӗтмен ҫӗртен
Телейлӗ пек туять хӑйне. Ак ерипен,
Уяр пек, хӑпарать пӳрне вӗҫне,
Унтан пуҫлать хӑй ҫулӗпе вӗҫме...
Чӗкеҫ пекех шыв ҫийӗпе вӗҫет,
Ҫуначӗпе чӗрсе шыва кӗрет.
Ҫак тӗнчене йӑлтах курас тесе,
Тӑри пекех хӑйне ҫӳле ҫӗклет...
Ун умӗнчех юхать пӗр юханшыв,
Выртать пӗр ял ун ҫумӗн лапчӑнса...

Вăрман та пур... Анчах мĕн чуль куççуль
Ăна кăларнă чух эпир çĕре тăкса.
Ак вăрмантан сукмак тухать чупса,
Унпа каяттăмăр çулла çырла татма...
Вăрманăм! Эп сана сума суса,
Эс патăн кĕрĕкна хывса мана!
Сана та юханшыв! Эс панă çул
Илсе каятчĕ шур Кĕтне патнех.
Ах, иртрĕ-çке сан, Сăхăтăм, кунçул.
Сана аса илсе тăвас ятне...
Ак ялăн хĕррипе пур Йăлăмкас.
Пăхма вăл пĕтĕмпех сад ăшĕнче.
Урамĕпе епле çарран чупас,
Кĕтет пекех анне кил умĕнче...
Халь ĕнтĕ çак тĕнче çапла çиçсе илсен,
Телейлĕ тĕлĕкпе вăл пĕр килсен,
Епле пуль чунăм савăнса тăмасть...
Анчах телей тени вăл нумая пымасть!

x x x

Пахча варринче чие
Сухăрлă пулакан...
Епле-ха кайса çиес,
Шутлать пĕр ача, выçсан.

Çурхи кунсенче, чăн та,
Тем те çиес килет.
Çулне хĕлĕпех уçман та
Кĕрт тăрăх ашмах тивет.

Ирхи шăнпа хытнă кĕрт
Тĕреклĕ кĕпер пекех.
Анчах та пырса кĕрсен,
Путатăн тĕппипех!

Кĕрт тăрăх шуса пăхап, -
Кĕрт-мĕн мана чăтать!
Чие çумнерех тухсан,
Сухăр çиме пулать.

Чие тунинчи сухăр
Хура куç пекех вылять.

Ăна çисенех тутă
Ĕнтĕ эп тин пулап...

Ăна çисенех пек вăй
Манăн ăшра пухăнать.
Сухăр çутиллĕ куçăм
Тĕнче вăййине вылять.

х х х

Эпĕ кун курнă хутлăх
Вутлăха кăна юрăхлă.
«Сутас ăна!» – терĕç.
Сутрĕç.
Çаврăнчĕç те утрĕç.
Халĕ ĕнтĕ вăл маншăн ютă,
Эпĕ çуралнă çуртăм.
Атте вăрçас çук тек хыттăн,
Анне хĕрхенеймĕ тек вăрттăн...
Чупать-ха ачи чупать.
Пушмаксăр та юрать.
Карта тĕлĕнче пĕр вырăн...
Чун халь те чĕнет ыррăн.
Унта эп ларатăп пĕччен,
Нихçан та пулман кичем.
Ирпе тепĕр чух сивĕ....
Тумтирĕ пуль пулнă кивĕ?
Хĕвел çав тĕле пĕлетчĕ,
Пĕрмай ман пата килетчĕ.
Пăхать пулĕ халь те пĕр хушă?
Анчах унти вырăн пушă...
Чупать-ха ачи чупать.
Выçă та юрать.
Ӳсет пахчара кашличĕ.
Тепре тутансан юринччĕ!
Урам тăршшипех йывăç...
Пуçтар çулçине пĕр ывăç!
Акă вăл хут, укçалăх.
Акă вăл пĕчĕк хуçалăх.
Сĕтел тăршшипех тăм тирĕк,
Хуçи, курăнать, çирĕп.
Çăка лашине утланчĕ,
Урам тăрăх хăваларĕ.

Халь ёнтĕ ăçта кайса кĕчĕç,
Кĕтсе илейместпĕр пуль кĕçĕр.
Таçта пулчĕç пулĕ сутлăх,
Таçта пулĕ тепĕр хутлăх?
Килкартинче вара пушă,
Хĕвел те пăхать пĕр хушă...
Сутас текенсем – сутчĕр,
Укçашăн ухмах пек супчĕр!
Эпĕ вара çичĕ ютăн
Пĕр утăм та тек тумăп...
Хĕвел тухасса пĕлетĕп,
Çав вырăнтах кĕтетĕп.

x x x

Эпĕ хӳшĕре выртатăп,
Çăлтăрсен шутне шутлатăп:
Паянтан эпĕ хуралçă!
Пахчара та ак хуралчĕ –
Пурпĕрех шап-шур тăраççĕ,
Çăлтăр евĕр курăнаççĕ
Пиçсе çитнĕ улмасем...
Ак, вĕсем те мĕн ӳкеççĕ
Çĕре çăлтăр евĕрех.
Пат! туса улма илет те
Шăп тăран тĕнче чĕтрет,
Темле чун каллех пĕтет,-
Чун çавна таçтан пĕлет!
Çав тĕнче ан пĕттĕр теп,
Çапăçма хатĕрленеп...
Вăрăсем ак час çитеççĕ,
Улмана татса çиеççĕ,
Вĕсенчен эп пит хăрап,
Пурпĕрех хастарланап.
Вăрттăн итлесе выртап,
Мĕн сас-чĕв, йăлтах тăнлап:
Ак, курак таçта сас пачĕ,
Сар автан килте вăранчĕ.
Кукареку! Турĕ те
Пат! çеç ӳкрĕ панулми.
Илтĕнет ура сасси!
Вăрăсем шуса кĕреççĕ,
Пахчана, тен, çĕмĕреççĕ!

Эп хăрап та, хăрамас та –
Хăрасан кунта выртмас та!
Ак таçта каллех пĕр сас, -
Чăн та вăрăсем пулас?
Эп илетĕп пысăк чул,
Ывăтатăп хуп! та хуп!
Кăшкăратăп кайăкла,
Такама хăратасла...
Тĕпĕр-тĕпĕр! тарса кайрĕç
Эп хăратнă вăрăсем.
Улмасем те ларса юлчĕç
Чисти, калăн, çăлтăрсем!

x x x

Анне çĕрулми кăларатчĕ...
Выртатчĕ ана хуп-хура!
Кĕрхи тӳпери çăлтăр евĕр
Тухатчĕ паранк вара...
Анне çĕрулми кăларатчĕ,
Эп çăлтăрла выляттăм...
Вĕтти-мĕннине пĕр çĕре –
Пулать пĕр çăлтăр ушкăнĕ!
Кăштах шултрине витрене –
Вăл тăрĕ вара уйăх тĕшне...
Çапла çĕрулми пуçтарсан,
Лараттăм пек çав тӳпере.
Шутлаттăм: кунта эп хĕвел пек,
Çăлтăрĕсем те сӳнчĕç...
«Мишук! – тет анне,
Ан лар çĕр çине.
Кĕрхи çĕр ытла та сивĕ».
Выртатчĕ ана ун чухне хуп-хура,
Эп çĕрулми пуçтараттăм...
Ура вара, чăн та, тăпра ăшĕнче –
Шутланă, таçта, тӳпере!..
Ун чух эп çарран çӳренĕ,
Ана сиввине пĕлмен те...
Халь ĕнтĕ ана çав çук пахчара,
Унта çăлтăрсем тек тухмаççĕ...
Тахçан чупса тухнă пĕр ача
Хĕвел пек пăхса лармас та...
Çапах эп ăна астăватăп,

Тăпра сиввине те туятăп...
Киле тепĕр хут килсен,
Анне сассине те илтеп:
«Мишук! – тет анне,
Ан лар çĕр çине.
Кĕрхи çĕр ытла та сивĕ».
Хура тӳпе евĕр ана хыçĕнче,
Ăшă кунсем умĕнче
Тăратăп каллех çавăнтах,
Çав ачах...
Анне çĕрулми кăларать пек,
Эп çăлтăрла выляп пек...

x x x

Хаяр тăрать кĕрхи çанталăк.
Кĕр кунĕ сивĕ те хура...
Шăнса кӳтет те çара алă,
Хытсах каять йĕпе ура...

Тĕм айĕнче пĕр пĕчĕк хутлăх;
Хӳтĕ пулать вăхăтлăха.
Кĕтсе ларап... Таçта пĕр сурăх
Çӳрет кичеммĕн макăрса.

Сар çулçă пек пăхса ларатăп.
Сурăх сасси вăрман таран.
Ытахальтен палан хыпатăп...
Тухмасть çур кунĕ асăмран.

Тĕттĕмленсех çитсессĕн кунĕ,
Сив çил çĕкленчĕ пĕр кана.
Сив çилпеле ун-кунăн хумлă
Пĕрремĕш юр пуçлать çума.

Çурхи пекех ак килсе тухрĕ.
Çуркуннехи пек пĕр ача
Сип-симĕс улăх тăрăх чупрĕ,
Ялт! сиккелерĕ мулкачла.

Шăнса кӳтмест тек çара алă,
Вĕри пекех йĕпе ура...
Йăлт улшăнать умри çанталăк
Шап-шур юр çунине кура!

x x x

Лупас тăрринче нумайччĕ
Чĕкеç йăвисем ялта.
Ун чух эпĕ питĕ айванччĕ –
Çӳреттĕм пăхса аялтан...

Чĕкеç хăй çуртне тăватчĕ
Таçти çырмари тăмран.
Ун чух чăнласах аванччĕ
Чупса çӳреме çарран.

Çарран çут çырма тăрăх
Ширанă эпир çав тăма,
Чĕкеç тунине пăхса тăнă
Хăйне валли хăтлă йăва...

Ăна курса хам та тунă
Чĕкеç тăмĕнчен тетте.
Тахçан пуçтарса хунă
Пĕрне, астăвап, пĕр тĕлте...

Халь çав теттене асилетĕп:
Куратăп, чĕкеç вĕçет.
Йăва çавăрмалăх, пĕлетĕп,
Вăл тăм шыраса çӳрет!

x x x

Шăкăрт! та шăкăрт! утмалăх
Çинçе кăна тӳр сукмакпа
Эп тахçанах шухăшланă
Çул çӳресе курма...
Инçет вăрмана çитес те
Юр чечекне татас.
Сив тивнĕ çеçке пек пĕтес те
Юр айĕн тепре шăтас.
Тен сертине тататăн
Шӳрпе пĕçермелĕх кăштах?

Е кайӑк пекех юрлатӑн,
Кайӑк пулатӑн татах...
Ҫак ҫул ҫинче пур пуль тем те.
Кӗтет, тен, телей пире?
Ҫил варкӑшӑн, шӑппӑн ҫӳрет те
Ҫӗре ҫавӑрса ӳкерет...
Пӗрех хӑрамасть-ха чун,-
Ҫурхи илӗртет-и-ха кун?
Сукмак типсе ҫитнӗ чух
Ҫула пурпӗрех эс тух.
Тӗл пулнӑ чечек ҫухалмӗ,
Пӗрмай сан ҫулна ҫутатӗ!

x x x

Самать вӑрманӗ аслӑ –
Унта ҫырла нумай!
Тен ҫавӑнпа хаваслӑн
Утатпӑр ҫиле май...

Акӑ ҫап-ҫут уҫланкӑ,
Хӗп-хӗрлӗеех ҫырла...
Ки-ак! тӑвать шаланкӑ
Пӗр типӗ ҫырмара.

Утса пырсан, асамлӑ
Тӗнче те уҫӑлать.
Ҫырла та пур татмалӑх –
Татсан пурак тулать!

Самать вӑрманӗ аслӑ,
Темтепӗр тупӑнать.
Кашнин хӑйӗн уҫланкӑ,
Кашни хӑй савӑнать.

x x x

Кӑмпа, кӑмпа, кӑмпа...
Кӑмпа татма каяс!
Алри хуп кунтӑка

Çурăм хыçне çакас...
Кайма юлташ та пур.
Кăмпа тĕлне пĕлет.
Чĕнеп ăна: «Кампур!»
Якăлт сиксе килет.
Йытпа чухне вăрман
Юмах пек курăнать.
Ак хуçăк пĕр турат
Ман çанăран тытать.
Тутлă кăмпа тавраш
Мĕн-ма-ха пытанать?
Шăна кăмпи кермен пек
Пурне те илĕртет.
Кампур мана çиллеслĕн:
«Ан тат!» - тесе вĕрет.
Тутли хăшне пĕлсен те
Кăшт тăхтаса тăрап.
Йыт шăршласа пăхать-тĕк,
Ăна татма юрать!
Ак йыт та çыртса пăхрĕ –
Пит йӳçĕ, курăнать!
Вĕре-вĕре вĕçтерчĕ –
Тен, кайăк хăвалать...
Ăнса пырать сунарăм,
Хуп кунтăк та тулать.
Эп вăрмана тав турăм,
Киле кайма юрать...
Анчах çулне-ши маннă,
Е пуç ман çаврăнать?
«Кампур!» – тесе чĕнеп те
Йыт хыççăн йĕр йĕрлеп.
Кампур ман питĕ ăслă,
Мĕнпур çула пĕлет.
Вĕре-вĕре хаваслăн
Кил еннелле чĕнет.
Халь ĕнтĕ пурте лайăх,
Халь ĕнтĕ эп тухап.
Манпа пĕрле кăмпашăн
Кампур та савăнать!

х х х

Чак-чак! тăватчĕ кайăк,

Ларатчĕ çырла çисе.
Эп хам та çапла тăвас пек
Пăхаттăм çырла çине.
Ăçта-ха çӳлте хĕрли пур,
Е кайăк кăштах çини?
Унтан тутлăраххине
Эсир çисе курнă-и?
Çавна шыраса хăпартăм, -
Çӳле-мĕн каять чие!
Чие вуллипе суллантăм,
Халь ĕнтĕ вĕçеп пек инçе...
Куçпа халь йăлтах виçетĕп:
Кунтан курăнать пур тĕнче!
Ял çумĕнче ак чӳхеннĕн
Пăртак курăнать униче...
Таçта аякра вăрман пур,
Унтан çывăхрах çырма –
Ак эпĕ те вăйлă çунатлăн
Вĕçеп те каяп çавăнта...
Çапла кайăк пек ларатăм
Чи пысăк чие çинче.
Унччен те пулмарĕ – выртатăп
Чие йывăççи кутĕнче...
Вĕçеп пуль тесе хăтланнă
Ура кайнă чух майĕпен.
Суран миçине шутланă,
Кайăк чак-чак! тунăçем.
Çӳлте çырли пурччĕ хĕрли те –
Татах та çиме кăмăл пур!
Эй, юлтăр кайăк валли те –
Ман хамăн халь юррăм пур!

x x x

Йăлăм урамĕ таса...
Унта эс пĕр çӳп те тупаймăн!
Пыратăп çул тăрăх чупса,
Çак пурнăç йĕрне те тупаслăн...
Тахçан ванса пĕтнĕ пĕр плуг...
Ун урапи тимĕр утăн
Мана туйăнать тепĕр хут
Тĕнче тăршшипе кусса пынăн...

Пĕр тимĕр пралук алăра...
Чăн-чăн! çеç тăвать урапийĕ!
Хитре хĕпĕртӳ! Мухтанатăп вара
Лаша чуптарма пултарнишĕн...

Чăн-чăнн! çеç тăвать урапа...
Вăл пурнăç пекех пăркаланчăк.
Тĕртсе тӳрлетеп пралукпа,
Ун чуппине те ăнланнăн...

Пĕлместĕп-ха эп, пурнăçра
Пурте килмест хаваслă.
Чăн-чăн! тăвакан Йăлăмра
Чупатăп темтепĕр тăваслăн...

Чупса та иртетĕп кил çумĕпе...
Сисместĕп, пӳрт икĕ куçлăн
Пĕр сассăр пăхса юлнине те...
Эп вĕт урапа тупнă!

Çавна кустарап урамра...
Çĕр чăмăрĕ те ун майлă
Пĕрле çаврăнать пек вара...

х х х

Килте никам та çук чухне,
Пĕрре хĕвеллĕ кун,
Хăпартăм эп мачча тăрне –
Унта-мĕн тем те пур!

Ик айккипе тăпра çинче
Тем чухлĕ кĕнеке.
Темле пĕр çĕтĕк ăшĕнче
Тупап пĕр çĕлĕке...

Ăна эп тăхăннă тахçан
Пĕр пиллĕкре чухне.
Ак халь те тăхăнса ярсан,
Пĕлен ача чунне...

Урам енче пĕр хушăк пур.
Пĕр пĕчĕк хушăк çеç!
Çав хушăкран кĕрет шап-шур
Пĕр пĕчĕк çутă кĕç...

Эп ун патне утса пырап,
Пăхап урам енне...
Эп урама çўлтен курап,
Курап урам сăнне...

Çўлтен пăхсан-мĕн вăл пачах
Курнать-çке урăхла.
Чупса пырать ак пĕр ача
Ытла та кулăшла...

Вăл питĕ пĕчĕк курăнать,
Ури те ун кĕске.
Урамĕ вăрăм тăсăлать,
Ак пайланать икке...

Пĕри уя илсе каять –
Унта эп тыр акман.
Тепри ак çырмана анать –
Унта та пул тытман...

Çўлтен-мĕн эп пĕлмен тĕнче
Пит лайăх курăнать.
Тани Настаçĕ тĕлĕнче
Пĕр сурăх çыварать...

Кĕтсе выртать ман Йăлăмкас,
Мĕнпур çынсем ĕçре.
Эп çеç ларап пăхса пĕр кас –
Эп халĕ пиллĕкре!

x x x

Эпĕ ĕне çухатрăм...
Вăл ытла аванччĕ,
Пăрулламаллаччĕ...
Çавăнпа та кĕтĕве
Ку таран яман пĕрре те.

Эп ăна илсе çӳреттĕм
Çитерме пĕр вăрмана...
Никамран та хăрамастăм:
Ĕнепе-çке эп унта!
Пĕринче çапла каç ен,
Темле тĕлĕк тĕлленсе,
Выртса юлнă эп тасçта
Çутă пĕр уçланкăра,
Ĕне кайнă пăрахса...
Вăранса сиксе тăратăп,
Ĕнене чĕнсе пăхатăп:
Çук ниçта та, çук ĕне,
Ӳкрĕ хуйăх пуç çине.
Каçченех çапла шырарăм...
Тен килте пуль теп ăна,
Чупса кайрăм васкаса.
Ăслă-ха, теп, çула пĕлет –
Тăрансан, хăех килет!
Ах, анчах килте те çук,
Хăть мана питрен халь çуп.
Тен, теп, кайнă кĕтĕве,
Кĕтӳпе килет киле!
Кĕтӳ ячĕ - ĕне çук.
Каç та пулчĕ – чун та çук.
Эх мана килте вăрçаççĕ,
Ĕнене тупма хушаççĕ.
Кай, тееççĕ, вăрмана!
Тен, пуçлать пăрулама?..
Вăрманта улах та тĕттĕм,
Унта ĕнтĕ хам та пĕтрĕм.
Шăп тăран вăрман тавра
Сас каять янра-янра...
Ахрăмпа пĕрле тасçтан,
Питĕ хытă кăшкăрсан,
Ĕне мар, такам тухсан,
Ăçталла-ши эс таран?
Эп аран-аран пыратăп,
Кашкăртан-ши хыт хăратăп?
Вăштăр-вăштăр çил килет,
Ман пуçа та ăс кĕрет.
Çав çу каçĕ, астăвап,
Питĕ шăрăхчĕ тăрать.
Шур пит тăрăх тар юхать...
Темĕн чул чĕнсен-чĕнсен,
Пĕр çырма пуçне çитсен,

Сас парать такам мана.
Чарăнса тăрсах тăнлап:
Ача евĕр пĕчĕк сас –
Пăруш мар пуль макăрать?
Эп те хирĕç кăшкăратăп...
Вăл татах та хытăрах,
Сăпкари ача пекех...
Мĕн ачи, ăçтан, такам
Тен ярать магнитофон?
Тен таçтан тухать шуйттан?
Чун та çук, ура та çук...
Ах, йĕрет те çырма пуç!
Сӳ-ӳ-ӳ! Туса пăхса тăратăп,
Ку сасран эп пит хăратăп.
Тен, тараттăм та тухса,
Аса илтĕм пĕр хутран
Пĕр халап пек калава:
Шăрăхра, шыв çук чухне,
Питĕ типĕ вăхăтра
Шыв ыйтса йĕрет шаланкă...
Ача евĕр макăрса,
Тĕнчене йăлт хăрататать.
Çын пырать вара чупса,
Ним те çук тет, сас кăна.
Ача мар, шаланкă тет
Кăшкăрма çапла пĕлет.
Эп çав калава асилтĕм,
Кулса ятăм та хамран,
Утса тухрăм вăрмантан.
Ĕнене эп тупаймарăм.
Тен, килте, килтех, шутларăм.
Сĕнксе çитрĕм те, пăхап:
Вăл кил умĕнчех тăрать!
Пăруланă пăрушне
Ертсе килнĕ кил умне...
Ĕнене эп юратап,
Пăрушне те чуптăвап.
Малашне те эп ăна
Илсе çӳрĕп çитерме!

x x x

Мамонт çине утланса
Эп каятăп пулмалла.
Мамонт вăл, пĕрре пăхсан,
Пысăках та мар пулас.
Тепĕртак кăштах тăрсан,
Килти выльăх пек курнать.
Вăл лаша пек тват ураллă,
Вăкăр пек ик мăйракаллă.
Урипе пĕрре хирет,
Шăлĕпе тепре тирет...
Хытă шур юра сирсе,
Çикелет пек курăка...
Курăкĕ вара юлман та,
Ӳсеймен юр айĕнче.
Халь мĕнле ман пулмалла,
Мамонтпах вĕт каймалла.
Мамонт вăйсăр, вăл апатсăр
Тăрса юлнă пулмалла,
Шур юр ӳкнĕ вăхăтра.
Çӳрçĕрте выртать халь пăрлăх.
Килсе çитрĕ пысăк хурлăх.
Мĕкĕрет ман мамонт хытă,
Вăл пуласшăн питĕ вăйлă...
Ах, анчах ури шăвать,
Пăр çинех кайса ӳкет...
Халĕ вăл манран та пĕчĕк...
Ах, пăхасчĕ-ха теп кĕçĕр,
Мамонтсăр юлать вĕт Çĕпĕр.
Курăкне татса паратăп,
Пурпĕрех, теп, хăтаратăп...
Тепĕр вăтăр пин çултан
Музейре ăна куратăп...
Эп унпах киле каятăп!

x x x

Урамра выртсаччĕ пĕр юман каска,
Ун çинче ларсаччĕ эп апат туса...
Аллăмра ман пурччĕ яка чул татки,
Ик кĕсье тулличчĕ мăйăр сап-сарри.
Кунĕпе лараттăм мăйăра катса,
Тарăн йĕр юлсаччĕ çавă вырăнта...
Эп çавна шыратăп çав каска çинчех, -

Пулас марччĕ теп-çке çав ача кулли,
Мăйăрĕ те пур ман ик кĕсье тулли...
Тепĕр хут катмашкăн пур-ха чул пекки.
Ах, анчах, куратăп, çуккă-çке каски.
Ĕнтĕ çук ачи те, ĕнтĕ çук сасси...
Чулĕ те çухалнă... Çук Йăлăмкасси!
Пурпĕрех пăхап-ха, майĕпен шутлап:
Çав каска пулсассăн, эп те пурăнап...
Шыраса тупатăп пĕчĕк чул пекки,
Çав тĕлех хуратăп пĕр хăма татки...
Шалт! катса пăхатăп сарă мăйăра –
Эп хама туятăп иртнĕ вăхăтра!

x x x

Тимĕр витнĕ пĕр пĕчĕк пӳртре
Çывăрать пĕр ача пит хитре...
Урамра ăшă çумăр çăвать,
Тимĕр витнĕ тăрри сас парать.

Çӳлте, калăн, çӳрет кулюкка,
Кăлтăр-кăлтăр! тăвать пĕр кана.
Кăлтăр-кăлтăр! тăвать те таккать,
Апат тупнăшăн хыт савăнать...

Пĕр ача пит хитре çывăрать.
Тĕлĕкре те – йăлтах курăнать:
Урамра ăшă çумăр çăвать,
Тимĕртен çемçе нимĕр тăвать...

Пĕр кана чарăнать те тăкать,
Тимĕре чăнласах та сăхать.
Ыйăхланă ача шутлать:
Ирхи çумăр апат тăвать!

x x x

Çап-çутă таса уçланкă,
Ем-ешĕл çырма Кĕтĕквар,
Пĕрле пулайманшăн каçарăр,
Пĕччен вĕт пулма çăмăл мар...

Эп вĕт унта çӳренĕ
Мĕн çуралнăранпах,
Ĕне-выльăха çитернĕ
Курăк шăтса тухсанах...
Унтах çырлине те пуçтарнă,
Савăннă та пуль çавăнпа...
Çĕмĕрт тăррине хăпарнă
Çырли кăшт хуралсанах...
Вар пусĕнче тахçан пурччĕ
Тачка качака кĕпçи.
Ăна кам çисе курнă,
Вăл тупнă апат уççи.
Анне чĕрçине таптанăн
Ак халь те утса пырап.
Вар тĕпĕнче пытаннăн,
Ачалăхăм, туйăнать...
Каллех ак выртса пăхатăп
Ем-ешĕл çерем çине,
Сап-сар чечексем пухатăп,
Тиретĕп картус тăррине...
Эй, пултăр ача чухнехи пек,
Çӳрер-и-ха çĕр çавăрса...
Таçта çавăрса çӳресен те
Çӳрен Кĕтĕквар тавра!

x x x

Чул сăртран чупса анатпăр Сăхăта,
Мерчен çăлкуç тапса тăрать унта.
Ĕçетпĕр те пĕр сыпкăм хăвăртрах
Утатпăр вăрмана пĕр шухăшпах...
Курăк татас пулать пăр пысăк мих,
Вăрман тăрать пек питĕ сых.
Эпир хăратпăр курăка татма,
Лесник те пултарать пире тытма...
Çапах тататпăр пĕрер мих шурă ути,
Киле кайма тухатпăр каç пултти...
Тем пысăкăш пĕр мих ĕнсе çинче –
Пĕкĕрĕлсех ларать пуль çут тĕнче?
Ача та мар – пырать, тен, кĕвенте?
Пĕр вĕçĕнче ун питĕ йывăр мих,
Ура пуçне вара тытса тăрать çĕр çех!
Утса çитетпĕр Сăхăта аран-аран,

Ăш хыпнă пек туятаăр хамăра,
Пĕрпĕтĕм шухăш çаврăнать çăлкуç тавра!
Унта, сип-симĕс витнĕ курăк айлăмра,
Канса выртма ытла та пит аван вара!
Ĕçетпĕр çăлкуçран пĕр сыпкăм сивĕ шыв,
Шыв ĕçнĕ хыççăн ĕнтĕ илтĕм вăй...
Халь ним те мар пире Сăхăт çырми,
Унтан тухатпăр та тăратпăр çаврăнса,
Вăрман енне пăхатпăр савăнса...
Вăрман таçта выртать-ха хуп-хура –
Ăçтан йăтса килетпĕр-ха, апла, çак курăка?

x x x

Тутлă улма куртăм –
Пĕчĕккĕ пек пултăм...
Кӳршĕрех ӳсетчĕ,
Ах, çиес килетчĕ!
Улмасем ӳкетчĕç,
Çавăнтах пĕтетчĕç.
Тутанса пăхмалăх
Пуçтарса кĕресчĕ...
Тутанса пăхмалăх
Пĕр улма çитетчĕ...
Ах, анчах хуралçă
Пуçтарма памарĕ.
Вăл тăват ураллă,
Курăнать сыхлавлă.
Вăй-хала çитертĕм,
Пахчана эп кĕтĕм.
Йыт çине пăхатăп,
Улмине пухатăп.
Ыйхăна-ши путнă,
Куçне лăп çеç хупнă...
Пĕр улма ак илтĕм,
Йытă пулчĕ вилнĕн...
Пĕр кĕсье тултартăм –
Пĕртте шарламарĕ,
Эп улма пуçтартăм –
Йытă мĕн шутларĕ?

x x x

Гришша, Çтаппан, Мишук –
Ача чух намăс çук.
Хуçатпăр турата,
Илетпĕр çăмарта...
Пăхса ларать йăмра,
Курак та кăшкăрать...
Çӳлех эп хăпарап,
Йăва тĕлне тупап.
Унта виç çăмарта –
Ярап вĕт хам ята!
Пурне те ывăтап...
Гришша, Çтаппан тăрать,
Кĕпе çине тытать.
Карк! кăшкăрать курак,
Йăвашăн пит хăрать, -
Эп вĕт ăна ватап...
Çат! турĕ ак пĕри –
Пĕтет курак чĕппи!
Эпир вара татах
Кулатпăр хытăрах.
Шарт! турĕ пĕр турат –
Курак, тен, тавăрать?..

x x x

Эп мунча кĕретĕп,
Куççӳльпех йĕретĕп.
Эп мунча кĕресшĕн мар, -
Эп пĕрре те чирлĕ мар!
Мунча мĕн вăл? Çу та çу...
Пĕвере те пур вĕт шу!
Пĕвере эпир çӳретпĕр,
Шыв чăххи пекех ишетпĕр
Кунĕпе çав пĕвере –
Курăнмастпăр та килте!
Кирĕк пур пуль çав ӳтре,
Лапка çине хучĕç те
Хурăн милĕк ăшшипе
Çуса ячĕç пĕтĕмпе...
Эп выртап лапка çинче,
Вăй юлмарĕ алсенче.
Алкумне тухса ларсассăн.
Сывласа ярап хаваслăн...

Мунчаран тухап таса.
Халь каяп – шыва кĕме!

х х х

Аштаратăп, астăватăп,
Лашапа сип-сив тăма.
Ун пекки эсир курман та
Каласа парам вара...
Ман атте килтех çапатчĕ
Питĕ çирĕп кирпĕчсем.
Çуртсене те купалатчĕ,
Кирпĕчĕ пулса çитсен...
Унтанпа çулсем иртсеччĕ, -
Халь те çирĕп çав çуртсем!
Ун чухне пит хыт ĕçлетчĕç -
Эпĕ те яман ята!
Эпĕ, пĕчĕккĕ пулсан та,
Чупкаланă çавăнта.
Ак мана йĕвен тыттарнă,
Лашапа пĕрле утап.
Çилĕм евĕр пулса кайнă
Çав тăма атте çапать...
Тăмĕ сивĕ, эпĕ пĕчĕк...
Тăм çăрса чĕппи те пулчĕ...
Халь те ак, çулсем иртсен,
Эпĕ пĕчĕк пек пулатăп,
Урара чĕппи шыратăп...
Çав тăма каллех çăратăп,
Çав тăмран хама тăватăп...

х х х

Эп тахçан вуланă пулĕ
Ылттăн шыракан çинчен,
Е тытасшăн пулнă пулă
Нишер шывĕ тĕпĕнчен.
Пĕринче, шыв пит начар та,
Илтĕм пĕчĕк кĕреçĕ.
Шыв çулне уçса ярам та,
Шывне ĕçĕп ӳпĕнсе...

Ӳпĕнсех, чăн та, ĕçетĕп,
Чăлт! куратăп тĕпĕнче
Пулă майлă пĕр çиçенчĕк
Йăлтăрать хăйăр çинче.
Йăл-йăл-йăлл! туса выртать вăл.
Пулă мар вăл, темĕскер.
Ман куçа хытах туртать те,
Илсе пăхрăм – пит чипер.
Пулă мар-мĕн – пĕчĕк кантăк,
Ылттăн мар-мĕн - çутă кварц.
Çав çутта курса шутларăм,
Эп те ылттăн шыракан.
Эп илтсеччĕ: çакăнта
Мерчен çăлĕ тет тапса...
Акă мĕн вăл! Çут ахах пек
Тапса тухрĕ те шалтан,
Хальхи вăхăтри юмах пек
Илсе кайрĕ пĕр çулпа...
Халĕ эп çăлсем чаватăп,
Шав уçатăп шыв çулне.
Ылттăн евĕрех шыратăп,
Мерчен, тенĕ çăлкуçне.

x x x

Микки сăрчĕ çинче таçта
Пурччĕ пирĕн тыр акнă ана...
Хырăм выçнă та кăнтăр апачĕ
Ман аппа хутаçран кăларчĕ.
Мĕн апачĕ унта? Пĕр çăмах.
Кăшт сыпмалăх йӳç сĕт анчах...
Тухнă хамăр вара тыр вырма!
Тухнă пуль вырма мар – хур курма!
Кунĕпе пилĕке авсан та
Хамăра тăранмалăх туман-ха!
Ман аппа, кăшт çисен, калать:
Выçă-тутăллă пулсан та
Çак каçалăка тухмаллах!
Ман вара, астăвап, вăй юлман, -
Пурпĕрех çавăнтан эп тарман!
Пуç тайсах кунĕпе вырнă,
Каç енне вилесле ырнă...
Каç енне пĕр кĕлте йăтса,

Çав сăртран хĕвелпе анса,
Çитсе ÿкрĕмĕр пек киле.
Эп ларатăп пăхса тĕттĕмре...
Ман аппа çĕн апат хатĕрлет,
Яшкара шур çăмах пиçет...
Çитрĕ, калăн, киле те çăтмах.
Çав анчах халь мана илĕртет...
Ах, анчах кашăка ÿкереп,
Эп сĕтел хушшинчех тĕлĕреп –
Тĕлĕкре эп çăмах çиеп!

x x x

Пахчара та пĕр çăлкуç
Чĕрĕ пек сывлать пĕр хуш.
Эп ĕçме пыратăп та,
Тутана тăсатăп та,
Хирĕç хăй те тем тăвать,
Тутине тăсса парать.
Тути ун сар хăйăртан.
Эп шутланă – ылттăнран!
Чăлтăр-чăлтăр! çутă ĕнчĕ
Пĕринче мана вăл сĕнчĕ.
Эп шутларăм – кĕмĕл ку!...
Пахчара выртать çăлкуç,
Чĕрĕ пек сывлать пĕр хуш.
Кам ăна ĕçме тăрать,
Кашнинех тута тăвать!

x x x

Сăхăт хĕрринче ларатпăр...
Кĕтÿ кĕтнĕ вăхăтрах
Çĕçĕлле хĕрсе вылятпăр...
Пĕр вылятпăр та чупатпăр,
Сăхăтра çут пул тытатпăр...
Хырăм выçнă, мĕн тăван?
Майкăна часрах хыван та,
Пĕр вĕçне çыхса хуран та,
Атма евĕр майкăпа
Çут пула сĕрен кăна...
Шăпăл-шăпăл пул тăвать,-

Атма тёпĕ пул тытать!
Чĕртсе яр та халь кăвайт,
Пулăран шашлык пулать...
Хырăм тутă, мĕн тăван?
Çĕçĕлле каллех вылян!

х х х

Виçĕ карп та пĕр карас
Ярăнаççĕ кӳлĕре.
Вĕсене епле тытас?
Тытас терĕм вăлтапа,
Тутлă пулĕ пул шӳрпи –
Вылянать шывра вăлти!
Эп вăлта ярсассăнах,
Виçĕ карп та пĕр карас
Ишсе тухрĕç çавăнтах...
Ай, караççĕ çăварне!
Ай, çиесшĕн апатне!
Кĕсйере ман пурччĕ çăкăр,
Çăкăра-ши вара çиччĕр?
Хуçса патăм тĕпретсе...
Ай, çиеççĕ киленсе!
Пулă-мĕн вылять илемлĕ,
Ăна тек тытас килмерĕ.

х х х

Курнавăшра хăвалăх,
Курнавăшра аван.
Кӳль хĕррипе пыран та
Сар чечексем татан...

Хур-кайăк та çĕкленчĕ
Таçтан шур вĕтлĕхрен.
Унта кĕме пĕлеймĕн –
Унта пур вĕлтĕрен!

Çыран хĕрне ларатпăр,
Чĕртетпĕр вут-кăвайт.
Çут пулăсем тытатпăр,-

Çут пулă чăп! тăвать.

Ӳкет кăвайт çутийĕ
Хуранчăк шыв çине.
Çут пулăсен куллийĕ
Пулатпăр ку чухне.

Çут пулăсем юлхавлă,
Пĕрре те выçă мар.
Ун вырăнне вылявлăн
Тритон хыпать пĕрмай.

Тритон та питĕ лайăх,
Анчах вăл кирлĕ мар.
Пулă тытма шутлатпăр,-
Эпир вĕт ухмах мар!

Кăвайт çунать çунатлă,
Кăварĕ шарт! тăвать.
Кӳлĕ тавра хаваслă
Çĕн юрă янăрать...

x x x

Микки сăрчĕ астутарчĕ
Манса кайнă вăхăта.
Çак сăртран вăл карăнтарчĕ
Ухă евĕр Сăхăта...
Сăрт çинчен пăхса тăратăп:
Нишер тăрăх Сăхăтпуç...
Аякра Канаш хуранкăн,-
Йăмăхать, пăхсассăн, куç.
Эп пăхатăп та куратăп...
Пĕчĕк чух та, ак, ӳссен,
Тепĕр хут утса тухатăп,-
Çук, пĕтмен-мĕн ман çулсем!
Вĕсем тăрăх эп турттарнă
Хам çумланă курăка.
Çавăнтах мана тыттарнă
Сухапăç суха тума...
Лашине те çӳреттернĕ
Нар çырми патне çити,
Ăшă çил çилхе вĕçтернĕ

Сиккипе вĕçтернипе.
Тыр та вырнă, утă çулнă,-
Астăвап мĕн тунине!
Ак каллех выртсах тăнлатăп
Микки сăрчĕн сассине...

x x x

Шăл катми пуличчен кататпăр
Тин çеç татнă сап-сар мăйăра.
Шыв ĕçетпĕр те канлĕн выртатпăр –
Аннă, калăн, кĕтӳ тапăра?

А, тен, чăн та, çапла çӳретпĕр,
Пĕр кĕтӳ выльăх пек вăрманта?
Мĕн тĕл пулнă, çавна çиетпĕр –
Çавăнпа тен ӳсетпĕр патвар?

Çимелли вĕт ун чух ним те çукчĕ, -
Çăкăрне те çимелĕх паман!
Анчах пирĕн, анне пек, пурччĕ
Чуна çывăх çырма та вăрман...

Çулла çитрĕ те пулă тытатпăр,
Çулла çитрĕ те – пур çырла!
Халĕ ак сар мăйăр кататпăр, -
Пурăнатпăр, куран, улпутла!

Тен çапла шутлама та пĕлмен-тĕр.
Анчах пулнă чылай чее.
Паянах ак яла килсен те
Аса илтĕм çавна телее...

Вĕт паян та çапла питĕ йывăр.
Çимелли вĕт паян та çук.
Çав ача евĕр сарă мăйăр
Эп кататăп пулать тепĕр хут?..

x x x

Килĕрен киле сухаллă

Сивĕ хĕл çӳрет.
Аслăкăн айне те халĕ
Юр вĕçсе кĕрет.

Ёнесем выçса тăраççĕ,
Сурăх мекеклет.
Выльăхсем хĕлле ыйтаççĕ
Утă, эп пĕлеп.

Йăпăрт хăпарса эп кайрăм
Аслăк тăррине.
Пĕр ытам çĕре пăрахрăм
Вăрман уттине.

Çаранри пек симĕс утă
Юр çинче выртать.
Сурăх халь унти чи тутлă
Чечеке шырать.

Савăнса пăхса тăратăп
Сурăх çинине.
Тăруках темле куратăп
Утă çуннине.

Мĕн-ха, мĕн çапла пит хĕрлĕ
Шалта ялтăрать?
Тен унта темле пĕр йĕрĕх
Халь те пурăнать?

Тĕлĕнсе пăхса тăратăп
Ут купи çине.
Майĕпен çеç ăнкаратăп
Çырла çаплине.

Вăрманта вĕт утă çулнă
Ăшă кунсенче.
Ун чухне çырла та пулнă
Курăк ăшĕнче...

Халĕ ак, пăхсан, куратăп:
Ахах пĕрчисем!
Çуллахи пек пуçтаратăп
Хĕрлĕ çырласем!

Çырли кăштă типсе кайнă.
Ту-утлă пурпĕрех!

Аслăк айĕнче те халĕ
Вăрманти пекех!

x x x

Эпĕ пул тытса килсеччĕ
Пысăк пĕверен.
Пахчари кўлле ярсаччĕ
Пĕтĕм чĕререн.
Пул нумай ишсе çўрерĕ
Çăварне карса.
Туссем питĕ хĕпĕртерĕç
Çав пулла курсан.
Кунĕпех ăна çитерчĕç
Çăкăр «аларан».
Килелле вара вĕçтерчĕç,
Курса тăрансан.
Каç та иртрĕ. Ир те çитрĕ
Тутлă тĕлĕкпе.
Ман туссем те персе çитрĕç
Çăкăр таткипе...
Ах, анчах пĕр пул та çуккă,
Çуккă пулăсем!
Кўл çинче пĕртен-пĕр çуттăн
Ишрĕç вак хумсем.
Тен вĕсем çунатлă пулнă,
Тупнă, тен, ура?
Çĕр çинче чăнах та юлнă
Икĕ йĕр... хура...
Эпĕ пул тытса килсеччĕ
Пысăк пĕверен.
Пахчари кўлле ярсаччĕ
Пĕтĕм чĕререн...

x x x

Каç енне, пĕччен, ача чух
Арман авăртса курнă-и?
Арман тесенех, пуçа
Темтепĕр кĕрет:
Унтах мĕн шуйттан
Тата сарă хĕр...

Тытаççĕ пулать усал-тĕселсем...
Арманĕ те вăл
Масар çумĕнчех...
Çĕр тĕрлĕ пĕр шиклĕх.
Тата михсене çĕклесе  кĕмелле...
Унта та пур иккĕленӳлĕх.
Тата хам тĕллĕн арман авăртса та курман...
Ак çитрĕ черет.
Яратăп пĕр мих пĕрмене,
Тăратăп пăхса, хăратăп тата –
Армансă вăрлать тет çăнăх!
Каймастăп ниçта та, пăхатăп, шур çăнăх
Темле çӳхе шыв пек юхать.
Вăхăт иртет...
Халь ĕнтĕ, çăнăхпа танлаштарсан,
Шуйттан та тем мар,
Пĕве айĕнчи хĕр те...
Масар та...
Унта ватăсем вĕт, ман тăвансаем.
Пил пачĕç те
Çăкăрлă пултăм!

x x x

Урамра ăшă çумăр çăвать:
Çут тĕнче урăхла курăнать.
Эп утатăп пăхса çӳлелле,
Эп пыратăп теме тĕллесе...
Эп шутлатăп: кунта кăна мар,
Аякра та çăвать пуль çак çумăр?
Аякра унта пур пысăк ял,
Хĕрринче пĕчĕк пӳрт те ларать...
Кунĕпе çапла çумăр çусан ак
Маччинчен те хура шыв каять...
Шап-шур чуллă плита та тăрăх
Урайне те юхса анать...
Астăвап-ха, тахçан, кайсассăн,
Çав хура йĕрсене асăрхарăм:
Тăрри шăтнă ĕнтĕ кун, терĕм.
Хăпарса та пăхас темерĕм...
Халĕ акă ăш çумăр çăвать,
Урай тăрăх пуль шыв юхать?
Вĕт çавна ман атте те курать,
Тен, анне те таçтан юнать?

Вăхăт иртрĕ, пĕрех эп çавна
Тем тусан та тумарăм пулать.
Урамра ăшă çумăр çăвать,
Пӳрт вара шăннă пек курăнать.
Йĕпенсе хуралса-хуралса кайнă пӳрт,
Эс мана тепĕр хут чĕнсе кĕрт.
Хĕвел пăхнă чухне кантăкран
Ман тăрасчĕ урай варрине.
Ман туясчĕ кив пӳрт ăшшине
Хулара çумăр çунă чухне!

х х х

Акă çитрĕ те ылтăн Сăпас:
Тепĕр хут ача евĕр чупас!
Çук, кунçулăм чупма памасть –
Каймалла, тет, авăн çапма...
Кĕрр! кĕрлет молотилка таçта.
Пĕчĕкех те мар пек, пурпĕрех
Курăнасчĕ-ха, теп, кĕререх.
Аялтан кĕлтесем ывăтап,
Ывăтап та... йăлтах ывăнап.
Молотилка вара çухăрать,
Ун çăварĕ «апат» ыйтать.
Вĕлтлетеççĕ кăна кĕлтесем...
Çӳлерех, çăмăлрах та, хĕрсем
Астараççĕ пире шӳтсемпе...
Ывăнсан, ак, ларатпăр канса...
Çитрĕ вăхăт апатланма...
Пурччĕ-ха хутаçра улмасем,
Пурччĕ çăкăр пĕр татăк тата...
Ак пулать те Сăпас тума!
Салтса ярăп та эп çыххине
Кусса тухĕç вĕсем ал çинех!
Ах, анчах ман хутаç пуш-пушах,
Куççульсем те тухатчĕç чутах.
Питĕ выçă пулсан та чĕнмес,
Никама та вăрçас килмест.
Сăпас, терĕç пуль çав. «Улма
Пулма кирлĕ Мишукăн нумай».
Çапла пулнă, чăн та, пĕрмай, -
Улмаран эпир катăк тăман.
Халь вара Сăпас кун выç юлап,
Молотилка пекех «кăшкăрап».

x x x

Ман кача пӳрни ҫинчи пĕр пысăк ҫĕвĕ
Тырă вырнине аса илтерчĕ...
Тĕтрери пек пĕр ӳкерчĕк: эпĕ пĕчĕк,
Аннепе кăна-ха эп ҫӳреп.
Аннепе-ха тухнă вырмана, -
Ман каяс килетчĕ вăрмана
Сарă мăйăр тутанма...
Е шыва кĕме, ҫырма хĕрне...
Ҫук, пулмарĕ, каяймарăм,
Урамра та чупаймарăм...
Сарă мăйăр вырăнне эп ҫиетĕп тыррине...
Пĕвери пекех ишетĕп ҫĕн каҫалăк умĕнче...
Уйăрса-ҫке ăна панă аннепе иксĕмĕре!
Анне манăн, астăватăп, питĕ ывăннă пулас...
Эп ларса канам-ха, терĕ. Эс вара, татах, вырах!..
Мĕн тăвас-ха, ывăнсан та ман каҫалăк тухмалла.
Эп пĕлетĕп-ха вырма!
Алă тытайми пулсан та пĕр ҫĕмел тăвасчĕ-ха!
Чиперех ҫапла выраттăм, астумастăп, тем тусан,
Чăтма ҫук хыт кăшкăраслăн ярса илтĕм аллăмран.
Эп пăхап та, пӳрне вĕҫĕ ҫакăнса кăна тăрать...
Тарпала пĕрле ак хутăш ҫĕре юнăм тăкăнать...
Ăт, ҫапла вăт аса килчĕ. Тахҫан тырă вырнă чух
Пысăк йĕр туса хăварчĕ вăхăт хăй те йывăр чух.

x x x

Симĕс ҫулҫă витнĕ
Пахчари пĕр хурăн
Пуҫа аса килчĕ...
Чĕрĕ пек ҫав хурăн!
Унăн ҫумĕнче те
Хурăн шыв ĕҫетĕп,
Ҫурхи пăрлă шывăн
Сиплĕхне илетĕп.
Туни тăршшипе те
Вĕллесем ҫакатăп,
Хурăн тăрринче те
Хам та кайăк евĕр

Шăхăрса ларатăп.
Кăмăлсем килсессĕн,
Инçене вĕçессĕн
Хама хам туятăп...
Çын кӳрентерсессĕн,
Симĕс витнĕ çулçă
Ăшне вĕлт! пытанăп...
Иртрĕ пурнăç хăвăрт,
Пултăм эп те шăпăрт!
Кайăк евĕр урăх
Шăхăрса лармастăп.
Тепĕр чух, пĕрех-ха,
Çавăнтах çӳреп-ха...
Пурнăç хăратсассăн,
Симĕс витнĕ çулçă
Ăшне вĕлт! пытанăп...

x x x

Хапха умĕнчи канав урлă
Эпĕ сиксе каçатăп.
Ура айĕнчи шыв-шурлă
Юра пăлхаштаратăп...
Эпĕ карап яратăп
Ватă йăмра тĕлне,
Хыççăн чупса анатăп
Шавлă çырма тĕпне...
Йăмра тăрринче, куратăп...
Пулатăп курак пекех!
Эпĕ йăва тăватăп
Шывлă çав юр çинчех.
Çат! тутарса ача пек
Хĕвел ак чăпăлтатать.
Ăшă алсишлĕ çил те
Ăна питĕнчен лăпкать...
Эпĕ карап яратăп
Çутă хĕвел патнех,
Хама та шывра курăнатăп
Пĕр космонавт пекрех...
Иртрĕç йĕпе ураллă
Çутă хĕвеллĕ кунсем...
Халĕ темле пулсан та,
Килĕр çав кил умнех!..
Сире килме шыв та уçăп,

Ярăп карап шыв çине...
Чупса та пырассăн хыççăн,
Курак пекех питĕ выççăн
Кăшкăрăп тем тăвас пек,
Ним тăвайман енне!

x x x

Пуянкас вăрманĕ –
Кам кĕрсе курман-тăр?
Эпĕр те кайсаччĕ
Милĕксем касма...
Çăка милĕк лайăх –
Çулçине пыл çунă!
Пĕчĕккĕн касатпăр,
Лав çине хуратпăр...
Вăрманта пит шăрăх,
Кайрăм ĕшне тăрăх:
Тăршшипех çырла та
Тăршшипех çăка...
Çеп-çемçе çулçийĕ,
Парка çеç вуллийĕ
Тин кăна пранланă
Путеке апат
Çуркунне пулать...
Лав та акă тулчĕ,
Хĕвел алне сулчĕ...
Вăрмантан тухма
Çул пăхатпăр та
Аптраса каятпăр:
Хăш енче халь ял?
Пĕтрĕ пирĕн лав!
Хăпарса пăхсан та
Ним те курăнмасть.
Кăшт тăрсан шутлатпăр:
Лаша хăй пĕлет!
Лашана шанатпăр,
Хыççăн çеç пыратпăр...
Иртрĕ-и пĕр авăк
Çул çухатнă вăхăт,
Палласа илетĕп
Хуçăк юмана...
Çакă çулпалах
Пирĕн тухмалла!

Халĕ ĕнтĕ лайăх:
Кил тĕлне пĕлетпĕр,
Путек пек сикетпĕр.
Милĕк те пур пирĕн,
Тăван ял та пур...
Вăрманти çырла эс...
Халĕ сывă пул!

x x x

Çтаппан манăн антипод.
Иксĕмĕр те ик пилот.
Ухса кайнă та çӳле,
Çӳллĕ çĕмĕрт тăррине,
Авăнатпăр та тататпăр
Хура çĕмĕрт çырлине.
Ытларах та авăнатпăр
Ал çитмен чухне çапла.
Те шутланă ик пилот
Çĕмĕрт пирĕн самолет?
Çăтăр-çатăр! Кĕмсĕрт-сĕрт!
Ай-я-яй! та Ых-ых-ых!
Илтĕнет çĕмĕрт тавра.
Çтаппан хытă тарăхать,
Пурпĕрех вăрçма хăрать.
Пур çĕртен те ыраттарнă
Юнашар выртать турат, -
Самолет пек курăнать!

x x x

Виçĕ-тăватă ача
Йĕри-тавра
Тăваççĕ пĕр карта.
Карта варри –
Пăрçа аври!
Сикеççĕ пăрçасем таçта, -
Тарса ӳкесшĕн пулмалла...
Анчах та çулăм хĕрхенӳсĕр
Хĕртсе ярать те самантрах,
Пиçсе çитет вăл хутаçрах.
Епле вăл тутлă ăшаланнă!

Унпа эс халь
Тутă пулсан та апатланăн...
Анчах та çав
Ушкăн ача
Пĕр-пĕринчен те аякра.
Çав уй та çав пăрçа
Текех выртмаççĕ картара...
Çапах та
Вăхăт пурпĕрех
Сехет пекех ĕçлет,
Çав пăрçана
Çав уй тĕлнех
Каллех ак ӳстерет.
Каллех пĕр-ик ача
Йĕри-тавра
Тăваççĕ пуль карта,
Чĕртеççĕ пĕр кăвайт?..
Çĕр кăвапи пуль çавăнта,
Вут чĕртнĕ вырăнта?

x x x

Çут уйра тăр пĕччен йывăç пурччĕ.
Ячĕ ун темĕнле хăрушлаччĕ...
Унран пурте темрен пек хăратчĕç,
Парнесем те, тен, вăрттăн паратчĕç...
Шăрăхра тепĕр чух пурпĕрех
Апата ун патнех вĕт ларатчĕç...
Питĕ лайăхчĕ ун айĕнче
Сивĕнсе те ларма сулхăнра.
Кăшт шикленнĕ пулсан та ăшра
Вăштăр-вăштăр çилпе те тулса,
Хăпартланнă кĕпе пек выртаттăм
Çӳлерен те çӳле ĕмĕтпе
Хурама çумĕпе çĕкленеттĕм.
Ун çулçи ăшĕнче, кайиччен,
Кайăксем те тем чуль пытанатчĕç.
Туратсем те вĕрен явнă пек
Пĕр-пĕрин вуллипе çыхланатчĕç...
Çыхăнтарнă пулех çав пире
Хурама тӳпери тĕнчепе?
Çавăнпа пырса ларнă унта
Хура халăх юлхав апата...
Васкамасăр ларсассăн çапла,

Вăй илсессĕн çемçе сулхăнта
Ĕçе тухнă та çутă уя...
Пулнă пуль вăл чăнах та уяв?
Анчах вăл халь çав чăнлăх ăçта? -
Курăнмасть çут уйра хурама та!

x x x

Пахчара пурччĕ пĕр хĕвелçаврăнăш.
Вăл пиçсе çитессе питĕ кĕтнĕччĕ...
Акă çитрĕ те сар кĕркунне
Пиçсе çитнĕ хура вăррине
Пĕр кĕсье пуçтарап çаврипе...
Авринчен автомат ăсталап,
Пуçĕнчен лайăх диск пулать...
Кунĕпе шăп выртан Йăлăмкас
Шатăр-шатăр! тăвать пĕр кас.
Авăкран эп вăрçса ывăнап,
Хĕвелçаврăнăш пек шăп выртап.
Аллăмра ман хура вăрри,
Эп шутлатăп, пулать пульли...
Ак вăрçас вăхăт тепĕр çитет,
Ах, анчах кăшт çиес те килет.
Çăварта пульлине хатĕрлеп,
Тăшмана хуппипе çеç переп...

x x x

Урамра симĕс курăк.
Курăк пек эпир пĕчĕк.
Курăка та çулма
Çăмăл мар пулмалла?
Пĕчĕк çеç урапи –
Вăл та пысăк пекех!
Турттаран ут купи
Курăнать лав пекех.
Çул çинчи ланкашки
Тинĕс пек туйăнать.
Тайăлать те ӳкет –
Тиеме халь тивет!?
Качака путекки
Килте питĕ кĕтет...

Урамри симĕс курăк
Мăй таран ӳснĕ пек.
Кам ăна халь татать,
Питĕ пысăк пулать.

х х х

Ача чухне эпĕ шутлаттăм:
«Çумăр çăвать тĕнче тавра!».
Ял хĕрринне чупса тухаттăм...
Чупса тухаттăм та кураттăм
Тусан çĕкленнине кăна...
Ун чух тусанлăрах тăратчĕ,
Çумри те хытăрах çăватчĕ
Çĕре çапса мĕн пур вăйран.
Кайран юхатчĕ çаврăнса,
Канавсенчен тулса тухса...
Ун чух нимрен те хăрамасăр
Тухаттăмăр шыв çул уçма...
Ак вăйлă шыв юхса анать,
Анкартине те час çурать!..
Юлатпăр вĕт паранксăрах!
Ун чух çав пĕчĕккĕ пулса!
Тухса чупаттăмăр çуртран,
Ӳсесчĕ-ха тесе, çарран.
«Çу, çумăр!» – каласа такмак
Парасшăн пулнă çу пăртак.
Ача чухне çапла шутланă:
«Çумăр çăвать тĕнче тавра!».
Тĕнче хĕрне те утса тухрăм.
Тĕнче хĕрне çитсен вĕт халь те
Вĕри кĕл выртнине курсан:
«Кунта мĕн çумăр тăкăнман та!
Мĕн-ма? – тесе  пăхса тăрап, -
Ик тĕнчерен пĕри - тусан?».

х х х

Тĕтреллĕ уй тăрăх çӳренĕ чухне
Темле мĕлкерен те хăратăн.
Юпа ларса юлнă та уй варрине
Куçа курăнать вăр-хурахăн!

Унччен те пулмарĕ – тапранчĕ капан, -
Ăна вĕт хывсаччĕ хамăр!
Унпа тĕл пулсассăн сехре те хăпать –
Пырать пек темле динозавр!
Пĕр тĕмеске... Вилтăприччĕ унта, -
Вăл пуррине те вĕт маннă!
Çĕр тĕрлĕ темле мăйракалă шуйттан
Çула пӳлсе лартрĕ кĕрт майлă...
Тем тĕрлĕ чĕрчун тĕтреллĕ уйра
Ман таврарах çӳрерĕç.
Эс вĕсенчен пурпĕрех ан хăра,
Вĕсем никама та тивмерĕç.
Тĕтре сирĕлсен акă тухрĕç ума
Шутлавçă юпа та, çурт евĕр капан та...
Вĕсем мĕнлине тимлесе эс сăна –
Вара, тен, куратăн хăвна та!

x x x

Пăрлă кантăк витĕр
Сар хĕвел кĕрет.
Сар çу пек, шур илнĕ
Кантăк ирĕлет.

Эп пăхса ларатăп
Сивĕ пӳлĕмре.
Чӳрече, шутлатăп,
Ăшă кăмака.

Ун пекех шап-шурă,
Ун пекех вутра.
Ăшăнма тесессĕн,
Чĕпĕтет вара!

Пурпĕрех аван пек.
Ача пек ларап.
Шутласа ларсан та
Тем те курăнать!..

Сивĕ пӳлĕм урлă
Кун шуса иртет.
Кантăкри çак пурнăç
Ĕнтĕ те килет?

x x x

Ача чухне çисе лараттăм
Çăкан та çуллă мăйăрне.
Хама эп кайăк пек кураттăм
Турат çинчен те вĕçнине.
Çисе тăранăп та ак ыррăн,
Çунат пек, сарăп алсене.
Унччен ÿкес килмест те хыттăн
Тытса пăхап туратсене...
Эп çирĕпех тытса ларатăп,
Çăка мăйрин те хуппине
Чĕрнепеле сӳсе пăхатăп.
Унта, шалта мĕн пуррине,
Сар хуппине сирсен, куратăп...
Пит выçă пулнă, çавăнпа та
Апат эп тупнă тĕшшинче.
Тута çинчен кайман тупа та
Юлса пуль çав туратсенче.
Вĕсем халь ÿснĕ питĕ пысăк,
Пӳртлĕх касма та пуль юрать.
Эпĕ вара пуçа-ши усрăм,
Ун умĕнче пăхса тăрап.
Çăка, тепре мана хăпарт-ха
Тĕнчен чи çӳллĕ тăррине,
Ху мăйăрна татма май пар-ха –
Ытла пĕлмерĕм тутлине.
Тем чухлĕ пуль апат эп çинĕ,
Таçта çӳренĕ аташса.
Кунтах пĕрех эп утса çитнĕ,
Тăрап ача пек савăнса.
Халь ĕнтĕ ак çисе ларатăп
Çăкан та çуллă мăйăрне.
Хама та кайăк пек куратăп
Турат çинчен те вĕçнине!

x x x

Халь ăçта-ши çав кăкшăм,
Туллиех сивĕ шыв.
Тăкасран питĕ шăппăн
Эс ăна йăтса пыр...
Питĕ шăрăх тăратчĕ...

Шывсăр çĕр те çунать!
Анне тырă выратчĕ,
Вăл мĕнле-ши чăтать?
Уйри çул кĕл пекехчĕ,
Кăшт пуссан та юхать.
Хăмăл хытă чикетчĕ –
Ман ура астăвать!
Халь ăçта-ши çав кăкшăм
Тăкрĕ сулхăн шывне?
Ăна ĕçнĕ чух ăшшăн
Йăлл кулатчĕ анне.
Йăл илеттĕм эп хам та
Ăна ĕçнĕ чухне.
Шалта кăшт курăнатчĕ
Эпĕ йăтнă тĕнче...
Халь ăçта-ши çав кăкшăм,
Ванса кайрĕ-ши чанк?
Уйра чавнă чух ваккăн
Тăм татки тупăнать...
Çавна шăпăн çĕклетĕп:
Кăкшăм пек туйăнать.
Тепĕр хут пек ĕçетĕп –
Анчах ăшăм канмасть!

х х х

Ача чухне хăйне пĕр ушкăн
Çӳреттĕмĕр çĕр çавăрса,
Каçаттăмăр çич çырма урлă,
Тухаттăмăр çап-çут уя...
Миçе хутчен çапла ир-каçăн
Танккана-ши эпир шкула?
Çав çул çинчех эпир шутланă
Пысăк çынсем пулса тухма.
Ирпе-ирех сĕм тĕттĕмпе
Эпир утаттăмăр пĕрле.
Темле хут-картонран туса,
Çутса яраттăмăр çурта.
Кăштах сапсан керосинпа
Çунса каятăн ху та!
Пыраттăмăр вара кулса,
Кашкăрсенчен кăшт хăраса...
Тĕнче варне хунă пекех,
Шăнса кӳтсен, Тăвай катин

Çунатчĕ çумĕнче кăвайт...
Тавра ларса тухаттăмăр,
Алăсене тăсаттăмăр...
Çавна манмастпăр нихăçан та.
Çав кăвайт тĕпĕ халь те пур:
Ман чĕрере вăл е уйра? –
Ăна тупсан, пурнатăп-ха!

x x x

Çурхи питĕ лăпкă ир
Хĕвел сапса тухрĕ сар вир.
Вир сапнă сарай тăрринче
Çӳрет кăвакарчăн... çисе.
Пĕр-иккĕ сăхать те пăхать,
Хăй мăшăрне йыхăрать...
«Мĕн чухлĕ тет вир кунта
Такам сăвăрса çĕр хута!».
Каллех ак пăхать те сăхать,
Тĕнче майĕпен вăранать...
Эх, ман та çав кайăк пекрех
Çӳресчĕ вир сапнă çĕртех!..
Анчах эпĕ кайăк мар.
Ун пек эпĕ выçă та мар!
Çапах та, курап, лăпкă ир
Хĕвел сапса тухрĕ сар вир.
Çӳлте кăвакарчăн çӳрет,
Çав сарă вире çиет...

x x x

Пĕчĕккĕ те, пĕчĕк мар та
Çӳретĕп чупса урамра.
Пушмакĕ тавраш кирлĕ мар та
Чупма питĕ лайăх вара.
Ак эпĕ чупса анса кайрăм
Пĕр пĕчĕк çырма хĕррине,
Шур чул айĕнчен кăлартăм
Çап-çутă çырма пуллине...
Пулли питĕ лайăх та ятăм, -
Çӳретĕр ишсе шыврах!
Чĕр курăк та татса патăм –

Çисен вăл ӳсет хăвăртрах!
Кайран ак кунсем иртсе кайрĕç,
Хĕл ларчĕ шап-шур айлăма...
Çырма тĕпĕпе пăр карнă,
Пит лайăх шуçкалама...
Шуса та пырсассăн ӳкетĕн,
Куратăн шывра, аялта,
Аквариум пек ӳкерчĕк –
Ман пулă çӳрет çавăнта!
Юрать эп ăна тытмарăм!
Çӳренĕ те вăл шывра
Пӳ хушнă тепре курăнмалăх –
Мана та вăл халь курать!
Курать пуль-ха – эп выртатăп.
Курать пуль-ха – эп сăнап.
Курать пуль-ха – эп чупатăп,
Çырма хĕррине анап...

x x x

Аслати килсе шаккарĕ
Хупă кантăкран.
Урама тухма васкарăм
Ача пек, çарран.

Кĕмсĕрт-кĕмсĕрт вăл çӳрерĕ
Пĕлĕт хушшипе.
Урамри çĕре йĕпетрĕ
Хăй куççулĕпе.

Урине-ши вăл амантнă,
Питĕ уксахлать.
Çиллине шывпа шăварнăн,
Кăшт мăкăртатать.

Куçне чăрр! уçса илет те
Çиçĕм ялт! çиçет.
Çумăрпа телей килет те
Çумăрпах пĕтет.

x x x

Ванса пӗтнӗ шкул çурчӗ
Куç умне тухса тăчӗ.
Ӗлӗкхи пек ик хутлă,
Вăл темле суккăр куçлă...
Ун тavри йывăççем те
Эпирех лартнисем пек...
Ах, анчах та хăрарăм,
Улăхса пăхаймарăм...
Эп вӗреннӗ шкул çурчӗн
Чӳречи ванса пӗтнӗ,
Илтӗнмест тек сасси те...
Илӗртмест тек тетте пек
Шкул ачин кӗнеки те...
Унта ларнă пӗр парта
Пулнă ман хушаматлă...
Çуннă пуль тен вăл вутлăн,
Е тaçта ванса выртнă...
Халь шалта ним те çук...
Ванса пӗтнӗ шкул çурчӗ
Чунăма хускатмарӗ.
Эп унпа пулнă чух
Вăхăт текваскатмарӗ...
Суккăр куçлă та чунлă
Юр çутиллӗ çул урлă
Пушă çурт эпӗ куртăм...

x x x

Кашни çулах, яла канма килсессӗн,
Анатăп эп кил хыçӗнчи çăлкуç патне.
Çав çăлкуçран, пуçа тайса сив шыв ӗçсессӗн,
Туятăп пек Нишер çырми чунне...
Вăл чăн анне пекех мана вӗт çупăрланă,
Çитернӗ кашличне те, панă пуллине.
Çуркуннепе йăмра тăрне хăпартнă
Ӗмсе лармашкăн тутлă çеçкине...
Е шăхличне пӗр туратран касса кăларнă –
Çӗр тӗрлӗ кӗвӗ те каланă пуль, ара.
Пит вăйлă çумăрта пӗве сыхланă –
Шыв юхнă вăхăтра хăранă таласран...
Çапла çырма тӗпне çăлкуç патне анатăп,
Туятăп тепӗр хут хама ача пекрех.
Çак çырмаран каймас тесе тупа тăватăп –
Çырма тăвать чуна чипертерех!

x x x

Юр хёвсе лартнӑ февраль
Темӗскер ӗнтӗ халь кӑтартать.
Ҫанталӑк пит сивӗ тӑрать,
Ҫӗр пичӗ пуль питӗ шӑнать...
Ҫапах та юр ҫунӑ чухне
Кӑштах урӑхла та пулать.
Юр ҫунӑ чухне пӗр ача
Юртан йӑвалать Юрача!
Юр уншӑн халь ним те мар.
Ӑна вӑл ун-кун уналать, -
Вӑл хӑй те темле курӑнать!
Вӑл Турӑ пек ак айванла
Туса тутарать те ача...
Чӑлпарр! саланаҫҫӗ вара
Юртан йӑваланӑ ҫынсем...
Ытла та пит сивӗ тӑрать –
Кам халӗ ҫапла хӑтланать?
Юр хёвсе лартнӑ февраль
Пачах урӑхла пурӑнать!
Вӑл халь хӑй ҫине илет те
Сивве тепӗр май ҫавӑрать.
Хӗл сивӗ тӑрасан, ҫулла тет,
Ҫулла вара ӑшӑ пулать.
Тен паянтан сив февраль
Ҫавӑншӑн ҫеҫ тӑрӑшать?

x x x

Пӗр ывӑҫ пулсан кашличӗ
Ирхи апат пулчӗ те...
Шик! турӗ кайӑк-шӑхличӗ,
Апат тунине курчӗ те
Пычӗ те ларчӗ...
Ҫӳрет-ха утса сукмак тӑрӑх,
Пӗрре те хӑрамасть.
Кашлич пит ыйтать пулсан та
Пӗрех эп ӑна памас.
Эп хам та паян питӗ выҫӑ.
Тен эп эрнипех ҫимен?
Ҫак кайӑк пек каллӗ-маллӗ
Кунта та утса ҫӳремен!..

Ăна мĕн? Вăл вĕçнĕ те кайнă...
Хăйне валли вăл тупать!..
А, эп вара пĕчĕк ача пек
Юлап çав сукмак çинчех...
Кашлич тутанса пăхсан ак
Чупса, тен, анап та сăртран,
Çырма хĕрринех тухатăп,
Çав кайăка та шуйхатăп...
Пăр ывăç кăначчĕ кашличĕ –
Ирхи апат пулчĕ те!
Ши! турĕ кайăк-шăхличĕ,
Апат пĕтнине курчĕ те
Вĕçрĕ те кайрĕ...

x x x

Пурччĕ пек пахчара пĕр чечек.
Çав чечек асăма килет.
Сар куçне хĕвелпе чăлт уçатчĕ,
Хĕвелпе каçхине шăп хупатчĕ...
Эп вара çавăнтан тĕлĕнеттĕм,
Чечек пек пулнине те пĕлместĕм...
Халь тин ĕнтĕ эп хам та чечек,
Куç хупма манăн вăхăт çитет...
Пурпĕрех, куç курать, пĕр чечек
Пахчара çеçке çурчĕ пек...